

# ХĔРАРĂМ ТĔНЧЕ ТЫТАТЬ

Проект авторĕ – Светлана Чикмякова.                  сайт: putpobedy.ru



## Ĕç патне чун выртсан...

**Хĕрарăмсем паян кил хуçалăхĕнчи пысăк тиеве хăйсем çине илнисĕр, ачи-пăчине воспитани панисĕр пуçне ĕçре те харпăр хăй пултарулăхне туллин çирĕплетеççĕ, профессире çитĕнÿсем тăваççĕ. Вĕсенчен пĕри, акă, Вăрнарти хутăш препаратсен заводĕнче тимлекен хатĕр продукцисен склачĕн кладовщикĕ Светлана Алгашева. Пултарулла, пуçарулла, ĕçчен çамрăк.**



«Август» компанин филиалне вăл вăхăтлăх кăна килнĕ. Экономика енĕпе аслă пĕлÿ илнĕскер унччен суту-илÿре, вĕрентÿ тытăмĕнче, налук инспекцийĕнче опыт пухнă. Пысăк предприятири ĕç вара ун кăмăлне тÿрех выртнă. Коллектив туслă, ĕç условийĕсем лайăх, çитĕнÿсем тума май пур.

«Вăл ĕçе чăннипех юратни пур енчен те сисĕнет», – тет Светлана пирки ун ертÿçи, хатĕр продукцисен склачĕн заведующийĕ Анастасия Алексеевна Веденина. Çамрăк хĕрарăм продукцие йышăнас тата ăсатас ĕçре питĕ тимлĕ. Учет, управ, таварпа пурлăх хаклăхĕ енĕпе операцисене яваплăха туйса пурнăçлать. Çĕннине хăвăрт ăнланать, хăнăхать, алла илет.

Производствăри ĕç çăмăл мар, анчах та çамрăк пуçа усма хăнăхман, малашлăха шанчăклăн пăхать. «Ĕç вăл ĕçленĕ май хăех вĕрентсе пырать», – тет Светлана Алгашева.

Заводри кладовщиксем компьютер программинче те аван ăнкараççĕ. 2019 çулта кунта SAP автоматизациленĕ системăн «Складпа анлăн ĕçлесси» модульне ĕçе кĕртнĕ. Светлана Вячеславовна çакă хăйĕн тивĕçне пурнăçлассине чылай çăмăллăх кÿнине палăртать: система тавар ăçта вырнаçнине хăех пĕлет, продукци ăсатассин принципĕсене пăхăнма та аван.

– Пурнăçра ĕç пурринчен лайăххи нимĕн те çук пулĕ. Ĕç çынна çĕклет. Мĕн чухлĕ ырлăх кÿрет вăл. Хама çак коллективра, паянхи условисемлĕ вырăнта ĕçлеме пÿрнĕшĕн савăнатăп. Килĕшÿре ĕç те ÿсĕнет, – кăмăллăн пĕлтерет Светлана.

Ача чухнех спортпа туслашни (вăл Пăваялĕнче çуралса ÿснĕ, Кĕçĕн Кипекри вăтам шкулта пĕлÿ илнĕ) çамрăка паян та пулăшса пырать. Шкулта чухне çăмăл атлетика енĕпе районăн пĕрре мар çĕнтерÿçи пулнă. Ку енĕпе халĕ те маттур. Çавăн пекех йĕлтĕр спортне те килĕштерет. Заводра иртекен мĕнпур мероприятие хастар хутшăнать вăл.

Мăшăрĕпе икĕ ачана кун çути панă. Вĕсене хăйсем пекех маттур çитĕнтереççĕ. Эдуард 20-ре ĕнтĕ, вăл – Шупашкарти электромеханика колледжĕн студенчĕ. Вера Вăрнарти 2-мĕш вăтам шкулта 5-мĕш класра вĕренет.

Çакăн пек маттур ĕçченсем пулни предприятишĕн те лайăх. Вĕсем ун аталанăвне пысăк тÿпе хываççĕ, малашлăх никĕсĕ пулса тăраççĕ.

**Людмила ИВАНОВА.**

## Черченкĕ çуррин портречĕ

**Чăвашстат пĕлтернĕ тăрăх, Чăваш енре 647,4 пин хĕрарăм пурăнать. Кашни вуннăшĕнчен çиччĕшĕ – хулара. Вăтам ÿсĕмĕ 42 çул. Хула хĕрарăмĕсем ялтисенчен 6 çул кĕçĕнрех.**

Пĕлтĕр 4,6 пин хĕрарăм мăшăрланăва кĕнĕ, вĕсенчен 3,3 пинĕшĕ – пĕрремĕш хут. Кашни хĕрарăмшăнах амăшлăх туйăмĕ тĕп вырăнта тăрать. Иртнĕ çул вĕсем 11,3 пин ачана кун çути панă, вĕсенчен 34% пĕрремĕш ачасем, 36% – иккĕмĕш, 22% – виççĕмĕш, 8% тăваттăмĕш тата хыççăнхи ачасем. Пĕр пин хĕр-ача пуçне 1045 арçын ача тивет.

2010 çулхи Пĕтĕм Раççейри халăх çыравĕ кăтартăвĕсемпе, республикăри 345,2 пин хĕрарăм професси вĕренĕвне илнĕ. Вăл шутра 35% – аслă тата вуз хыççăнхи пĕлÿ.

Ученăй степеньне илес пулсан, наука докторĕсем хушшинче 28 проценчĕ хĕрарăмсем, наука кандидачĕсем 47%. Ĕçлĕх статусне илес пулсан хĕрарăмсен 90 проценчĕ наймпа вăй хунă. 6 проценчĕ – харпăр хăй предприятийĕнче е харпăр хăй усçă ĕçре.

Хĕрарăмсенчен çурри ытларахăшĕ пĕр çĕрте, виççĕмĕш пайĕнчен ытларахăшĕ икĕ е ытларах çĕрте ĕçлеççĕ.

## Чĕкеç хĕрĕ ачаран вăр-вар

**Кашни çыннăн хăйĕн шăпи. Ăраскалĕ те тĕрлĕрен. Йывăрлăхсене пăхмасăр этемлĕхĕн черченкĕ çурри малаллах талпăнать, кил-тĕрĕшри ĕçе йĕркелесе пырать. Ачисене тĕрĕс воспитани парса çитĕнтерет, йышлă мăнукĕсем валли те вăхăт тупать. Тивĕçлĕ канăва кайсан та çемье бюджетне пуянлатас тесе ырми-канми ĕçлеме тăрăшать. Пурнăç шайне лайăхлатать.**



Ырă ята тивĕçлĕ маттур хĕрарăмсенчен пĕри – Вăрнарта пурăнакан Галина Филиппова. Вăл хăйĕн ĕмĕрĕнче тĕрлĕ ĕçре вăй хунă, паянхи кун район администрацийĕнче тирпейлÿçĕре тăрăшать. Хăйĕн тивĕçне тÿрĕ кăмăлпа пурнăçлать. Тасалăхпа тирпейлĕхшĕн яваплăха туйăнаран унăн ĕçĕ курăмлă.

Галина Васильевна Уйкас Кипекре çуралса ÿснĕ. Ашшĕ конюхра, амăшĕ уй-хир ăстинче вăй хунă. Кăвак шуçăмлах ура çине тăнă. Амăшĕн пурнăçĕ тумхахсăр пулман.

– Аннен пĕртăванĕсем çуралсанах нумай вăхăт пурăнайман. Пĕрин хыççăн тепри çут тĕнчерен ирех уйрăлса кайнă, – терĕ Галина Васильевна. – Çавăнпа та анне çуралсан ăна ĕлĕкхи йăлапа икĕ ят панă. Чĕкеç тесе чĕннĕ, хут çинче вара – «Дарья».

Чĕкеç кайăкĕ пекех питĕ ĕçчен пулнă. Колхозра уйăрса панă çарана яланах чи малтан çулса тухнă. «Чĕкеç, эсĕ пĕртте канма пĕлместĕн», – тенĕ ун пирки. Галина Васильевнăн амăшĕн – Дарья Филипповнăн – çамрăклăхĕ тертлĕ пулнă. Хаяр вăрçăн нушине тÿснĕ. Хусанпа Сăр хÿтĕлев чиккисене тума хутшăннă. Окоп чавнă.

Улми йывăççинчен аякка ÿкмест, теççĕ. Чĕкеç хĕрĕ пĕчĕкренех ĕçе явăçнă. Вăр-вар пулнă. Амăшĕ пекех çичĕ хут тара ÿксе ĕçленĕ.

Вырăнти шкулта сакăр класс пĕтернĕ. 1975 çулта инкĕшĕ чĕннипе Вăрнарти «Ремстрой» организацине ĕçе кайса кĕнĕ. Районсем хушшинчи «Вурнарская» строительсен организацийĕнче те тимленĕ. Штукатур-маляр пулнă. Галина Филиппова район тĕп больницин ача-пăча уйрăмне, Вăрнарти культура керменне çĕкленĕ çĕрте те вăй хунă. Строительство ĕçĕ çăмăл мар, цемент раствора наçилккесемпе картлашкасем тăрăх çÿлти хута йăтма вăй-хăвачĕ те самаях кирлĕ. Анчах та Чĕкеç хĕрĕ, ачаранах ĕçре пиçĕхнĕскер, хастарлăхпа палăрнă. Галина Филиппова Шупашкарти милици шкулĕнче те тăрăшнă. Кунта та хăйĕн профессийĕнче чăн-чăн ăста пулнине çирĕплетнĕ.

Мăшăрĕпе виçĕ хĕр çуратса ÿстернĕ. Пурнăç кустăрми пĕр пек шумасть. Савăнăçпа пĕрлех хуйхисуйхи те юнашарах. Шел те, мăшăрĕн Олег Николаевичăн кун-çулĕ кĕске пулнă.

Хĕрĕсем амăшне хисеплени, мăнукĕсем пĕрин хыççăн тепри çут тĕнчене килни Галина Васильевнăн кăмăлне çĕклет. Тата ĕçе сÿрени те кичемлĕхе сирет. Маттур чăваш хĕрарăмĕ тăван ялĕнчи тĕп кил вучахне сÿнтермест. Кунта çу вăхăтĕнче ĕç вĕресе кăна тăрать. Галина Филиппова анкартинче темĕн тĕрлĕ пахчаçимĕç туса илет. Хĕрĕсем çемйисемпе яланах килсе пулăшаççĕ.

– Ĕç çынна илем кÿрет. Ытлă-çитлĕ пурăнас тесен тăрăшма ÿркенмелле мар, – тет Галина Васильевна.

**Елена ПОРФИРЬЕВА.**

Проект Чăваш Республикин Цифра аталанăвĕпе информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви пулăшнипе пурнăçланать.